# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

82 (7507) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Хăюлăхпа паттăрлăх пулччăр ялан

## Çурçĕр Кавказран – тăван киле



Çурçĕр Кавказ тăрăхĕнче йĕркене сыхлама, террористсен киревсĕр ĕçĕсене путарма, мирлĕ халăх пурнăçне упрама çар çыннисемпе танах милици сотрудникĕсем те хутшăнаççĕ. Акă август уйăхĕн вĕçĕнче районти шалти ĕçсен пайĕнче тимлекен Николай Евгеньевич Кудряшов тата Федор Николаевич Бычков милиционерсем Çурçĕр Кавказран таврăнчĕç. Вĕсем çур çуллăх служба командировкинче пулчĕç, Чечен Республикинчи Шелковской районĕнчи Червилянная станицăра обществăлла йĕрке сыхлăхне тивĕçтерчĕç. Чăваш Республикинчен вара Çурçĕр Кавказа 68-ăн кайнă.

Муркаш районĕн милици сотрудникĕсем аякри çĕрсенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă, хисепе тивĕçнĕ. Н.Е. Кудряшова Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ В.В. Антонов алă пуснă Хисеп грамоти, тăватă медаль тата икĕ паллă парса хавхалантарнă. Ф.Н. Бычков вара виçĕ медале тата пĕр паллăна тивĕçнĕ.

Милици сотрудникĕсенчен кил-йышран аякка каяс килмест пулĕ тесе ыйтсан, каймалла пулсан, татах та кайăпăр, тесе хуравларĕç вĕсем харăссăн.

**Хамăр инф.**

**Сăн ӳкерчĕкре: хăюлăхпа палăрнă милици ĕçченĕсем.**

Район уй-хирĕсенче

## Лайăх çанталăк нумайлăха мар

Юлашки вăхăтра çанталăк уяр тăчĕ. Мал туртăмлă хуçалăхсенче çак тапхăрта ытларах уй-хир ĕçĕсене вĕçлеме тăрăшрĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, ĕçсем «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕсенче пыраççĕ. Çак вăхăта ăна 844 гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Юлнă лаптăк – 56 гектар.

Пахча çимĕçсем 30 гектар йышăнаççĕ. Вĕсене 7 гектар çинчен пухса илнĕ.

Тымар çимĕçсем 175,5 гектар çинче пулсан, çак вăхăта вĕсене 81 гектар çинчен пуçтарса кĕртнĕ.

Кăçал тыр-пула 15086 гектар çинчен пухса кĕртмелле пулнă пулсан, вырса илмен лаптăксем пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен «Волга» хуçалăхра пур.

Районĕпе тыр-пул тухăçĕ гектар пуçне вăтамран 18 центнерпа танлашать. Ильич яч. хис. хуçалăхра тухăç 39,7 центнер.

Хуçалăхсенче çĕртме сухи 4340 гектар çинче сухаласа хăварнă. «Ударник» Чкалов яч. хис., «Свобода», «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче ку ĕçе япăх мар йĕркеленĕ.

Камăн сăвăм пысăкрах?

## Сĕт ытларах – укçа нумайрах

Çак вăхăта районĕпе кашни ĕне пуçне тивекен талăкри сăвăм вăтамран 11,3 килогрампа танлашать. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе ку кăтарту 9,3 килограмм. Иртнĕ çул вăл 9,2 килогрампа танлашнăччĕ.

Ĕнесенчен ытларах сĕт суса илекенсем хушшинче «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем. Ку хуçалăхсенче талăксерен кашни ĕне пуçне вăтамран 10 килограмм ытла сĕт суса илеççĕ.

Сутлăх сĕт хисепĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче 83,1 процентпа, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 90 процентпа, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 40 процентпа танлашать.

Ĕç сыхлавĕпе условийĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен координаци канашĕн ларăвĕнчен

## Ытларах хамăртанах килет...

Ĕçе тухса утнă чух никам та усалли пирки шутламасть. Шел пулин те, тепĕр чух инкек пирĕн кăмăла пăхса тăмасть çав. Тепĕр чух хамăр тимсĕрлĕхе пулах инкеке кĕрсе ӳкме пулать. Çакă тепĕр хут хуçалăх ертӳçисемшĕн вуншар ыйту хушшинче ĕçлекенсене тивĕçлĕ хăрушлăхсăр условисем туса парасси тата ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсем чи мала тухса тăмалли пирки калаççĕ. Çак кунсенче ĕç сыхлавĕн тата условийĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен районти координаци канашĕнче шăпах чи малтанах республикăри АПК предприятийĕсенче пулнă йывăр сусăраннă тата çынсем вилнĕ тĕслĕхсене пăхса тухрĕç.

–Çакнашкал чуна ыраттаракан тĕслĕхсем пирĕн районта пулма пултараймаççĕ тесе паян никам та шантарса калаймасть, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, асăннă канашăн ертӳçи А. Н. Иванов ларура.

Инкеке шырама вара инçех те каймалла мар. Кăçал тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра “Свобода” хуçалăхра кăшт кăна комбайна вут хыпса илеймен. Юрать-ха, çулăма вăхăтра сӳнтернĕ. Çавăнпа та, Альберт Николаевич калашле, уй-хир ĕçĕсем вĕçленичченех пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене çирĕп пăхăнмалла. Кăçал районта тухнă 38 пушартан 12-шĕ çулăмпа асăрханусăр пулнипе тухни те тимлĕхе ӳстермелли çинченех калать.

Тен чăннипех те хăрушсăрлăх техникин требованийĕсене пурнăçлама укçа-тенкĕ çителĕксĕрри те япăх витĕм кӳрет пулĕ, анчах та асăннă комисси членĕ, Муркашри чăх-чĕп фабрикин ертӳçи Н. Г. Ванеркин каланă пек, предприятисенче инкексенчен ытларахăшĕ дисциплина хавшаккипе пулнă. Республикăра пулнă инкекре пĕринче ав комбайн штурвалĕ умне ӳсĕрле ларнăран кун-çул татăлать. Çĕнĕ комбайн çине эрех ĕçсе мĕнле ларан? Кунта вырăнта дисциплина çуккипе пĕрлех ĕçлекенсем яваплăха туйманни те яр уççăн курăнать.

Дисциплина тенĕрен, ларура районти шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ертӳçин А. В. Ершовăн сăмахĕсене те илсе кăтартас килет. Кăçал 8 уйăхра руль умне ӳсĕр ларнă 23 (пĕлтĕр ку вăхăтра – 15 тĕслĕх пулнă кун пекки) водителе тытса чарнă. Инкек пуласран хăтарнă тесен те йăнăшах пулас çук пулĕ. Халĕ хăвăр хуçалăхра пулнă тĕслĕхсене куç умне кăларăрха. Хĕрӳ тапхăрта мухмăр чĕртсе руль умне ларакансем çук-çук та, тĕл пулнах вĕт.

Ларура ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçин çумĕ, асăннă канашăн секретарĕ А. Н. Кузьмин илсе кăтартнă тĕслĕхсене пăхса тухсан та сăлтавĕсем ытларахăшĕнче çавсемех: вĕсенчен пĕр-иккĕшне илсе кăтартсан ытлашши пулмĕ. Кăçалхи март уйăхĕнче “Свобода” хуçалăхра пусмаран ӳксе йывăр аманнă тĕслĕх пулчĕ. Нискасси шкулĕнче вара электричество токĕпе йывăр аманнă тĕслĕх. Кăçал пулнă тепĕр 7 инкек вара, телее, çăмăл аманнипех иртсе каять (ларура “Оринино”, “Свобода” хуçалăхсемпе Нискасси шкулĕнче ĕç сыхлавĕпе ĕç законодательстви епле пурнăçланнине те пăхса тухрĕç).

Ку мĕн çинчен калать? Чи малтанах, вырăнсенче хăрушсăрлăх техникишĕн яваплă çынсем ĕçлекенсене мĕнле ĕçлемелли пирки тĕплĕн ăнлантарман пирки. Тепĕр енчен, ĕçлекенсен те хамăр пурнăç ытларах чух хамăр аларах иккенни çинчен асра тытасчĕ. Мĕнле калаççĕ-ха кун пек чухне, тав Турра, пирĕн районта кăçал ытти республикăра илсе кăтартнă тĕслĕхсем пек, çынсем вилнĕ тĕслĕхсем пулман производствăра. Ан та пултăрччĕ кун пекки.

Ку вара йăлтах хамăртан, вырăнсенче хăрушсăрлăх техникине пăхăннинчен килет. Анатолий Николаевич каланă тăрăх, район шайĕнче çакăншăн яваплă çынсемпе вĕренӳсем пулсах тăраççĕ. Ку çеç те мар. Вырăнсене тухса, ĕç условийĕсен хăрушсăрлăхĕпе ĕç сыхлавĕн требованийĕсене епле пурнăçланине тишкереççĕ. Кăçал кăна ку ыйтупа районти 40 предприятипе организацинче пулнă.

Коллективри ĕç-хĕле йĕркелес ĕçре коллективлă договор пулни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тĕрлĕрен хавхалантару мелĕсене те унтах пăхса хăварма пулать. Ку вара ĕçлекенсене малалла туртăнма, тăрăшарах, дисциплинăна пăсмасăр ĕçлеме хавхалантарать. Районта пĕтĕмпе 271 юридически лицо пулсан, вĕсенчен 126шĕнче çеç коллективлă договор пур иккен. Ку каллех ертӳçĕсем çӳлерех асăннă ыйтусене тĕпе хуманни пирки каламасть-ши? Ларура пур предприятисемпе организацинче те коллективлă договорсем обязательнăй йĕркепе пулмаллине палăртса хăварчĕç. Хамăр пурнăç интереслĕрех пуласси те, инкекрен сыхланасси пекех, хамăртанах килет. Асра тытасчĕ çакна.

**Л.ПАВЛОВА.**

Ĕçлĕ визит

## Наци проекчĕсене пурнăçланипе паллашрĕ

Кĕçнерни кун района ЧР Президенчĕн администрацийĕн ертӳçи Э.А. Аблякимов килчĕ. Вăл Москакасси, Муркаш, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсене çитсе курчĕ, кунти çынсемпе курса калаçрĕ.

Президент администрацийĕн ертӳçи наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе епле ĕçлесе пынипе тĕплĕн паллашрĕ. Ку енĕпе малашне те çине тăрса ĕçлеме кирлине палăртрĕ. Уйрăмах уйрăм çынсене хушма хуçалăха аталантарма кредитпа тивĕçтерессине çине тимлĕ пăхма хушрĕ. Кĕрхи ĕçсем епле пынипе те кăсăкланчĕ Энвер Азизович. Ял хуçалăхĕнче çĕнĕ технологисемпе усă курса продукци туса илессине палăрмаллах ӳстерме кирлине палăртрĕ. Районти сывлăха сыхлас, вĕренӳ ĕçĕсен ыйтăвĕсене те аякка хăвармарĕ вăл. Суйлав участокĕсене хатĕрлес, комиссисене йĕркелес ыйтусене те тишкерчĕ.

Э.А. Аблякимова район пурнăçĕпе паллашма район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов пулăшрĕç.

Хушма хуçалăх

## Сĕт хакланать

Кăçалхи 9 уйăхра районти халăхран пĕтĕмпе 3703 тонна сĕт туяннă. Çав шутра Муркаш райповĕ – 1254 тонна, Мăн Сĕнтĕр райповĕ – 819 тонна, уйрăм предпринимательсем – 1630 тонна.

Ял çынни укçа тăвас тесе тĕрлĕ майсем шырать. Паянхи кун сĕт сутни япăх мар тупăш панине ăнланать вăл. Çавăнпа килсерен икшер-виçшер е ытларах ĕне тытакансем те пур.

Хакĕ вара расна. Акă Элĕк районĕнчи уйрăм çын сĕт завочĕ 1 литрне 12 тенкĕ те 50 пуспа йышăнать. Ку районти “Новый путь” хуçалăх та çак хакпах туянать. Конкуренци.

Муркаш райповĕ вара литрне 10 тенкĕпе пуçтарать. Мăн Сĕнтĕрсем ĕнерччен 9 тенкĕпе йышăннă пулсан, паянтан 10 тенкĕне хăпартассине пĕлтерчĕç. Иртнĕ эрнере Шаптак Турайĕнче пулма тӳр килнĕччĕ. Кунта уйрăм предприниматель 9 тенкĕ те 50 пуспа пуçтарнине пĕлтерчĕç.

Кĕркуннепе сĕт суса илесси чакать. Выльăх апачĕ те йӳнĕ мар. Апла пулсан сĕт малашне те хакланĕ. Ял çынни те хăйĕн ĕçĕн пархатарне курма тивĕçлĕ.

**А. ИВАНОВ.**

Йывăç лартма хутшăнар

## Уйăхлăх иртет

Чăваш Республикин Президенчĕн 2005 çулхи указĕпе Йывăç кунне ирттерме йышăннине пурнăçласа иртнĕ эрне вĕçĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов октябрĕн 1 – 31-мĕшĕсенче районта йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх ирттерме йышăну турĕ, ĕçсен планне çирĕплетрĕ. Уйăхлăхра эрозипе кĕрешес ыйтăва тĕпе хуни курăнать. Ку ыйту вара кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта.

Мĕнех, уйăхлăха активлă хутшăнса йывăçсем ытларах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар.

**Хам. инф.**

«Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту»

## ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ М.А. Михайловский хуравлать

**ЫЙТУ: 1981 çулта мана «Халăхсен туслăхĕн орденĕпе» наградăланă. Çавна май мана уйăхсерен укçан компенсаци тӳлеме тивĕç мар-и?**

**З.М. АЛМАКАЕВА.**

Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялĕ.

**ХУРАВ:** Шел пулин те, Сирĕн кун пек право çук. Ку орден статусĕпе килĕшӳллĕн ăна тивĕçнĕ çыннăн «Ĕç ветеранĕ» ята илме кăна май пур. Çитменнине 20 çул таран çар службин стажĕ кирлĕ.

Хисеплĕ вулакансем! Сирĕнтен ыйтусене çак адреспа кĕтеççĕ: 428000, Шупашкар хули, Николаев урамĕ, 4-мĕш çурт, «Радио çурчĕ». «Пенсионер Чувашии» хаçат редакцине те ярса пама май пур. «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» («Важный вопрос») тесе паллă тумалла.

Аса илтеретпĕр: «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» передачăна ĕç кунĕсенче «Раççейри радио» тата «Маяк» радио» хумĕсем çинче те итлеме пултаратăр. Ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Евгений Слепов ертсе пырать.

## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.** **РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**